27-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

1944 ИЮНЬ 6 ЫТЛАРИКУН 111(606) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Промартельсенчи отчетпа суйлав кампанийĕ

Кăçал июнĕн 1-мĕшĕпе июлĕн 1-мĕшĕ хушшинче республикăри промысла тата инвалидсен кооперацийĕн артельсенче отчетпа суйлав кампанийĕ пулса иртет. Артельсен членĕсем, отчетпа суйлав пуххисенче хăйсен вăрçă вăхăтĕнчи ĕçĕсен итогĕсене тишкерсе тухса, малашнехи задачăсене палăртса хăвараççĕ, правленисене, союз президиумĕсене тата ревизи комиссийĕсене кĕртĕн çаслăса суйлассĕ.

Промысла тата инвалидсен кооперацийĕ халăх хуçалăхĕнче пысăк вырăн йышăнса тăрать. Ĕçсыннисен ыйтăвĕсене тивĕçтерессĕ, фронтпа çĕршыва снаряженисем, шинель-çипсене парас тĕлĕшпе паттăр ĕçлеççĕ. Промысла тата инвалидсен кооперацийĕн хăйсен умĕнчи задачăсене ăнăçлă пурнăçа кĕртмешĕн нумай ĕçлет. Мĕншĕн тесен вĕсем халăха хуçалăхра кулленхи кирлĕ таварсем туса парас тата хуçалăхри ĕçсене пулăшас тĕлĕшпе те нумай ĕçлеççĕ.

Отечественнăй асла вăрçă вăхăтĕнче промысла тата инвалидсен кооперацийĕ продукци туса кăларассине чылай ӳстерчĕ. Çапла, республикăри промысла кооперацийĕн артельсем кăна 1943 çулта 1942 çулхинчен 11,7 миллион тенкĕлĕх продукци ытла туса кăларнă. Анчах ку вăл промысла кооперацийĕн пĕтĕм пултарулăхне кăтартмасть. Союзсен руководителĕсем тата артельсен председателĕсем вырăнти пуянлăхсене туллин усă курас енĕпе тĕрĕс ĕçлемеççĕ.

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи Асталăхсенчи «Лесоруб» артель çĕршыва фронт валли кашни уйăхрах ытларах та ытларах продукци парать. Вăл апрель уйăхĕнчи планне ирттерсе 61 пин тенкĕлĕх ытла продукци туса кăларнă. Артель коллективĕ темиçе уйăх хушши ентĕ Чăваш АССР Совнаркомĕпе куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавне хăйĕн аллинче тытса тăрать. Йĕпреçри «Красный строитель» артель çурçулти плана срокчен 220 процент тултарнă. Çак çитĕнĕве артель коллективĕ, чи малтанах, вырăнти рессурсемпе туллин усă курнипе тума пултарнă. Артельте кăçал спичка, обоз хатĕрĕсем тăвакан производствăсем, слесарно-ремонтнăй мастерской çĕнĕрен уçнă. Халĕ тата çĕнĕрен икĕ производство уçма хатĕрленессĕ. Кун пек примерсене татах та нумай илсе кăтартма пулать.

Анчах республикăри мĕнпур артельсем çавăн пек ĕçлемессĕ-ха. Нумай артельсем продукци кăларассине ӳстермессĕ кăна мар, производство планĕсене те ăнăçлăн тултармассĕ. Чăвашпромсоюз, Чăвашдревпромсоюз, Чăваштарпромсоюз, Швейпромсоюз системисене кĕрекен артельсенчен çурри те хăйсен планне тултарайман. Çавна пула промысла кооперацийĕ кашни уйăхрах çĕршыв умĕнче ытларах та ытларах парăма кĕрсе пырать. Кăçал малтанхи тăватă уйăхри плана пĕтĕм продукци кăларас енĕпе Чăвашпромсоюз 93,9 процент, Чăваштарпромсоюз 53 процент, Чăвашдревпромсоюз 88 процент çеç тултарнă. Май уйăхĕнче те ĕçсем юсанни курăнмасть. Пĕр союз та хăйĕн производство планне тултарса çитереймен.

Мĕншĕн-ха промысла кооперацийĕ хăйĕн задачисене ăнăçлă пурнăçламасть? Халĕ артельсенче пулса иртекен отчетпа суйлав пуххисенче вăл ыйту çине тĕплĕн ответ парасса. Промысла тата инвалидсен кооперацийĕн артельсенче демократи пăсăлнă. Артельсенче 1941 çултанпа отчетсем иртермен. Çавна пула нумай артельсенче правленисем, ревизи комиссийĕсем саланса кайнă, правлени составĕнчен çынсем çухала пĕтнĕ. Çакă артель хуçалăхне йĕркелесе тăма чăрмантарать.

Промысла тата инвалидсен кооперацийĕн союзĕсен работникĕсем, артель председателĕсем, отчетпа суйлав пуххисене тĕплĕ хатĕрленмелле. Отчетпа суйлав пуххине тĕрĕс ирттерме кирлĕ. Артель членĕсен уставпа тивĕçлĕ прависене туллин усă курма май памалла.

Промысла тата инвалидсен кооперацийĕн союзĕсемпе артельсен правленийĕсен отчетпа суйлав пуххисенче промысла кооперацийĕн ĕçне лайăхлатас тĕлĕшпе ирттерсе тĕрĕслемелле.

Промысла тата инвалидсен кооперацийĕн ĕçне йĕркелес тĕлĕшпе РСФСР Совнаркомĕ çумĕнчи Управленийĕн Чăваш республикинчи уполномоченнăйĕ отчетпа суйлав кампанине, политикăллă пысăк ĕç вырăнне хурса, устава çирĕппĕн пăхăнса ирттерессине куллен ертсе пыма тивĕç.

Партипе совет тата комсомол организацийĕсен артельсенче отчетпа суйлав пухăвĕсене тĕрĕс ирттерме, артельсене ертсе пыма ĕçре палăрнă, пултарулă çынсене суйласа хăварма, артельсенчи мĕнпур ситменлĕхсене тăрă шыв çине кăларма, малашнехи ĕç валли татăклă мероприятисем палăртса хăварма пулăшмалла. ВКП(б) райкомĕсемпе горкомĕсен, райсовет исполкомĕсен артельсен ĕçĕпе куллен интересленмелле, вĕсене куллен пулăшса пымалла.

Промысла тата инвалидсен кооперацийĕсенчи работниксем халĕ, пĕтĕм совет ĕçсыннийĕсем пекех, Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказĕпе хавасланса, фронтпа çĕршыв валли ытларах продукци туса кăларас туйăмпа ĕçлессĕ. Вĕсем, Сталин юлташăн приказне çĕнĕ çитĕнӳсем тунипе ответлеме пулса, обязательствăсем илнĕ. Артельсенчи отчетпа суйлав кампанине кăтартуллăн ирттерни промысла тата инвалидсен кооперацийĕсен ĕçĕнчи ситменлĕхсене пĕтерме, вĕсен ĕçне лайăхлатма май парĕ.

Промысла кооперацийĕнчи комсомолецсемпе çамрăксен бригадисен ăмăртăвĕ

ВЛКСМ Чăваш Обкомĕ промысла кооперацийĕн артелĕсенчи комсомолецсемпе çамрăксен бригадисен республикăри социализмлă ăмăртăвне организацилеме йышăннă. Хăйĕн решенийĕнче вăл комсомол райкомĕсемпе хула комитечĕсене, артель председателĕсемпе пĕрле, комсомолецсемпе çамрăксен бригадисен ăмăртăвне анлăн сарса пыма, рабочисен квалификацине ӳстерес тĕлĕшпе татăклă мерăсем йышăнма тата культурăллă-массăллă ĕçе лайăх организацилеме хушса хăварнă.

Ăмăртура мала тухакан комсомолецсемпе çамрăксен бригадисене премилеме виçĕ преми тунă.

Пĕрремĕш преми — ВЛКСМ Обкомĕпе промысла кооперацийĕн РСФСР Совнаркомĕ çумĕнчи управленийĕн Чăваш республикинчи уполномоченнăйĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ Ялавĕ. Унпа пĕрле бригадира 500 тенкĕ, бригада членĕсене 200 тенкĕ укçан преми параççĕ.

Иккĕмĕш преми — бригадира 300 тенкĕ таран, бригада членĕсене 200 тенкĕ таран укça парса премилеççĕ.

Виççĕмĕш преми — бригадира 200 тенкĕ таран, бригада членĕсене 125 тенкĕ таран укça парса премилеççĕ.

Унсăр пуçне комсомолецсемпе çамрăксен бригадирĕсене бригадăсене ертсе пынăшăн промысла кооперацийĕ енĕпе хушса тӳлессĕ. Бригадăра 2 çын пулсан—бригадирăн пĕр кунхи ĕç укçин 10 процентчĕ чухлĕ, бригадăра 3 çынтан пуçласа 6 çынна çити пулсан—бригадирăн пĕр кунхи ĕç укçин 15 процентчĕ чухлĕ, бригадăра 6 çын ытла пулсан— бригадирăн пĕр кунхи ĕç укçин 20 процентчĕ чухлĕ хушса тӳлессĕ.

Бригадăри çынсен йышне бригадăна организациленĕ вăхăтри хисеп тăрăх шута илессĕ. Бригадăран çынсем тухни бригадира хушса тӳлессине чакарма пултараймасть.

Çурт-йĕрсем тума кивçен укçа памалли çĕнĕ йĕрке

Коммунальнăй банк хуласенчи тата рабочи поселокĕсенчи ĕççыннисене хăйсем валли çуртсем тума кивçен укçа парать. Ку таранччен пĕр çынна кивçен 5 пин тенкĕ таран килĕк çуллăха панă. Правительство йышăннă тăрăх, малашне кивçен 10 пин тенке çити тата 7 çул хушшинче тӳлесе татмалла йĕркепе памалла тунă.

В. С. Обухов юлташа РСФСР тава тивĕçлĕ врачĕн ятне панă

РСФСР Верховный Совет Президиумĕн 1944 çулхи майăн 25-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх, халăх сывлăхне сыхлас тĕлĕшпе ĕçсем тунăшăн сывлăха сыхлас ĕçналлă ĕçсем тунăшăн сывлăха сыхлас ĕç работникĕсен пĕр ушкăнне РСФСР тава тивĕçлĕ врачĕсен ятне панă. Вĕсем хушшинче пирĕн республикăри больницăн главнăй врачĕ Василий Степанович Обухов юлташ пур.

Çураки планне кашни колхозрах тултармалла

Пĕр гектар çĕре те акмасăр хăварар мар!

ВĂРМАР, ШĂХАСАН, ОКТЯБРЬСКИ РАЙОНĔСЕМ ÇУРАКИ ПЛАННЕ ТУЛТАРНĂ

Красноармейски, Вăрнар, Чурачăк, Çĕрпӳ, Элĕк, Муркаш, Сĕнтĕрвăрри, Шупашкар, Калинино, Сĕнтĕр, Куславкка районĕсем хыççăн Вăрмар, Шăхасан тата Октябрьски районĕсем те çураки планне тултарнă.

Вăрмар районĕ план тăрăх 18.483 гектар вырăнне 18.530 гектар акса плана 100,2 процент тултарнă.

Шăхасан районĕ 12.415 гектар акса çураки планне 100 процент тултарнă. Районри колхозсем халĕ çĕрулми лартассине 70,8 процент, кантăр акассине 76 тултарнă.

Октябрьски районĕ 11.763 гектар акса çураки планне 100,2 процент тултарнă. Çĕрулми 93 процент лартнă, кантăр 76 процент акнă.

Планран ирттерсе акасси малалла та пырать.

Етĕрне МТС-ĕ хăйĕн планне тултарчĕ

ЕТĔРНЕ, июнĕн 5-мĕшĕ. (Телефонпа). Ĕнер МТС тракторсемпе çуркунне тумалли ĕçсен планне 100,7 процент тултарчĕ. План тăрăх 3249 гектар сухаламалла пулнă, мĕнпур тунă ĕçе çемçе суха çине куçарса шутласан, 3273 гектар сухаланă.

Çуракинчи ăмăртура Токсубаев юлташ ертсе пыракан 1-мĕш номерлĕ трактор бригади мала тухрĕ, вăл хăйĕн планне 143 процент тултарчĕ. Çак бригадăри тракторист Б. Бурзаников юлташ 140 гектар вырăнне 190 гектар сухаланă. Трактористка Дербенева юлташ хăйĕн планне 170 процент тултарнă.

10-мĕш номерлĕ трактор бригади те (бригадирĕ Н. Спиридонов юлташ) çуркунне тумалли ĕçсен планне 132,8 процент тултарса, иккĕмĕш вырăн йышăнчĕ.

Кăçалхи çул эпир трактор ĕçĕн пахалăхĕ çине ытларах çавăрăнса пăхрăмăр.

МТС хăйĕн планне маларах тултарма пултаратчĕ, анчах та хăшпĕр бригадăсем ытла та япăх ĕçлерĕç. Акă 11-мĕш номерлĕ бригадăнах илер (бригадирĕ Николаев юлташ). Вăл çак вăхăта çитсе хăйĕн планне пурĕ те 65 процент çеç тултарнă.

Н. ЩЕТИНИН,
МТС-ăн старши агрономĕ.

Çуракинче тухăçлă та лайăх ĕçленĕшĕн, ĕççынни депутачĕсен райсовечĕн исполкомĕсемпе ВКП(б) райкомĕсем тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп Хăми çине кĕртнĕ:

60. Улатăр МТС-ĕн 3-мĕш номерлĕ трактор бригади (бригадирĕ С. В. Куделькин юлташ). Çак бригада çуркунне тракторсемпе тумалли ĕçĕн планне 212 процент тултарнă. 116 гектар сухалас вырăнне 246 гектар сухаланă. Чи лайăх трактористсем Кашелев, Матвеев юлташсем сменăри нормăна 3,8 гектар сухалас вырăнне 4,5—5-шер гектар сухаланă.

61. Улатăр МТС-ĕн 1-мĕш номерлĕ трактор бригади (бригадирĕ С. М. Степанов юлташ). Çак бригада тракторсемпе çуркунне тумалли ĕçсен планне 131 процент тултарнă. План тăрăх 297 гектар сухалас вырăнне 389 гектар сухаланă. Чи лайăх трактористсем Малыгина, Степанова, Бушуев юлташсем сменăра план тăрăх 3,8 гектар сухалас вырăнне 4,5—5-шер гектар сухаланă.

62. Комсомольски МТС-ри комсомолецсен 7-мĕш номерлĕ трактор бригади (бригадирĕ С. П. Прокопьев юлташ). Çуркунне тракторсемпе тумалли ĕçсен планне 155 процент тултарнă. План тăрăх 356 гектар сухалас вырăнне 552 гектар сухаланă, 357 килограмм горючи перекетлесе хăварнă. Чи лайăх трактористкăсем М. Васильева, А. Павлова, Н. Соловьева, В. Герасимова юлташсем çуркунне тумалли ĕçсен планне 155 процентран пуçласа 163 процента çити тултарнă, кашниех 100—110-шар килограмм горючи перекетленĕ.

Ăмăртса ĕçленин результачĕ

ШĂХАСАН. Иртнĕ çулта тракторсемпе тумалли ĕçсен планне ăнăçлăн тултарнăшăн Шăхасанти машинно-тракторнăй станци Чăваш АССР Совнаркомĕпе ВКП(б) Обкомĕн куçса çӳрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулчĕ. Хĕрлĕ ялава кăçал та хăйĕн аллинчех тытса тăрасшăн МТС коллективĕ социализмлă ăмăртăва тухрĕ. МТС çуракинче тракторсемпе тумалли ĕçсен планне республикăра чăн малтан тултарчĕ. Июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне МТС тракторсемпе çуркунне тумалли ĕçсен планне 155,2 процент пурнăçа кĕртнĕ. 6-мĕш трактор бригади (бригадирĕ Н. Тимофеев) çуракинче тракторсемпе тумалли ĕçсен планне 177,5 процент, 3-мĕш трактор бригади (бригадирĕ Михайлов юлташ)—176,2 процент, 8-мĕш трактор бригади (бригадирĕ Н. Чернов)—173,0 процент, 5-мĕш бригада (бригадирĕ И. Сидоров)—156,0 процент тултарнă, 500—700-шер килограмм горючи перекетлесе хăварнă. Çавăн пекех ытти бригадăсем те плана ирттерсе тултарчĕç.

В. ВЕСЕЛОВ.

Çураки пĕтерне хыççăн

МУРКАШ. (Телефонпа). Районри колхозсем çуракине ăнăçлăн вĕçлерĕç. Нумай колхозсем планран ирттерсе темиçешер гектар акрĕç. «Свобода» колхоз 15 гектар, «Труд» колхоз—5 гектар, «Крестьянин» колхоз—4 гектар, «Красное Сормово» колхоз—5 гектар планран ирттерсе тĕштырă акнă.

Чылай колхозсем çуракине вĕçленĕ хыççăн çум çумлама тытăнчĕç. «Труд» колхоз 29 гектар клевера çумкурăксенчен тасатнă. Çум çумлас ĕçе «Крестьянин», «Свобода». Буденный ячĕпе тăракан колхозсенче пикенсех тытăннă.

Уйрăм колхозсем тырă вырмалли машинăсене юсама тытăннă. «Труд» колхозра (председателĕ Семенов юлташ) икĕ лобогрейка, пĕр косилка юсанă. Тимĕрçĕ Герасимов юлташ çурласене шăллама тытăннă, вăл 200 çурла шăлланă та ĕнтĕ. Çак колхозра тырă вырнă вăхăтра 98 ача вырнаçмалăх ясли пулмалла тата столовăй пулать. Яслине кирлĕ çимĕçсене çителĕклĕ уйăрнă. Çĕртме тумалли вырăна 255 лав тислĕк кăларнă.

Ф. МАЛЫШКИН.

Юлса пыракан колхозсене пулăшаççĕ

ЕТĔРНЕ, июнĕн 3-мĕшĕ. (Телефонпа). Районри колхозсем 9679 гектар акса çураки планне 93 процент тултарнă. 17 колхоз çураки ĕçĕсене пĕтĕмпех вĕçленĕ. Çуракине пĕтерне колхозсем социализмлă пулăшу йĕркипе пĕрне-пĕри пулăшаççĕ. Крупская ячĕпе тăракан колхоз хăйĕн лашисемпе «Красный пахарь» колхоза сухаласа, акса парать. Киров ячĕпе тăракан колхоз уйрăмах юлса пынине кура, унта МТС-ăн 2 трактор бригадине янă.

Çураки пынă вăхăтрах нумай колхозсем тырă калчисене çумкурăксенчен тасатма тытăнчĕç. «Парижская Коммуна» колхоз пурĕ 150 гектар тырра çумкурăксенчен тасатнă. «Правда» колхоз та 12 гектар çум çумланă.

Малтисемпе танлашмалла

Йĕпреç районĕнчи нумай колхозсем фронтовой вунăкунлăхра лайăх ĕçлерĕç. «11 лет Чувашии», «Çĕнĕ пурнăç», Ворошилов ячĕпе тăракан тата ытти чылай колхозсем июнĕн 1-мĕшĕ тĕлне акса пĕтерчĕç. «Çĕнĕ пурнăç» колхозра, П. Юрин колхозник тăрăшнипе, кӳлме вĕрентнĕ 8 вăкăрпа ака ĕçĕнче лашасемпе пĕр танах усă курнă. Вăкăрпа сӳре ĕçĕнче ĕçлекен Лыщев юлташ кулленхи ĕç нормине 125—130 процент таран тултарнă.

Çак колхозра çураки вăхăтĕнче кашни лашапах вăтамран 15—16 гектар ĕçленĕ, çапах та çураки вăхăтĕнче лашасем ывăнни пулман. Лашасене лайăх пăхни, часчасах кантарса темиçе хут çитерни ĕçе татса панă.

«Çĕнĕ пурнăç» колхоз çураки ĕçĕсене вăхăтра та лайăх вĕçлерĕ, планран ирттерсе 3 гектар акрĕ.

«Чувашия», «Первое мая», «Красный урожай», Калинин тата Молотов ячĕпе тăракан колхозсем çаплипех юлса пыраççĕ-ха.

Çак колхозсен юлса пынин тĕп сăлтавĕ — туртăм вăйĕ çине йĕркеллĕ пăхманнинче тата колхозниксен ĕçне йĕркелеме пĕлменнинче. Асăннă колхозсене коммунистсем Шадуллин, Евгеньев, Елагина, Иванов, Осипов юлташсем ертсе пыраççĕ. Вĕсем малта пыракан колхозсенчи ĕç опычĕсемпе усă курма пĕлмеççĕ.

П. КУРАКОВ.

ÇУРАКИНЕ ВĔÇЛЕМЕЛЛИ ВУНĂКУНЛĂХ МЕНЛЕ ПЫНИНЕ КĂТАРТАКАН
СВОДКА
(Июнĕн 5-мĕшĕ тĕлне)

Районсем	Мĕнле вырăн йышăнать
Сĕнтĕрвăрри	1
Красноармейски	2
Элĕк	3
Чурачăк	4
Сĕнтĕр	5
Куславкка	6
Вăрмар	7
Муркаш	8
Çĕрпӳ	9
Вăрнар	10
Октябрьски	11
Калинино	12
Ишлей	13
Шупашкар	14
Шăхасан	15
Елчĕк	16
Етĕрне	17
Тăвай	18
Канаш	19
Советски	20
Комсомольски	21
Йĕпреç	22
Çĕмĕрле	23
Первомайски	24
Чкаловски	25
Хĕрлĕ Чутай	26
Пăрачкав	27
Улатăр	28
Шăмăршă	29
Кувакино	30

Чăваш халăхĕ С. А. Андреев геройăн паттăр сăнарне ĕмĕр-ĕмĕр манмĕ

Н-ски часть командирĕ пирĕн паттăр землякăн Совет Союз Геройĕн Семен Алексеевич Андреевăн амăшĕ патне çакăн пек çыру янă:

«Хисеплĕ **Андреева** юлташ!

Сирĕн юратнă ывăлăра — гварди сержантне Семен Алексеевич Андреева СССР Верховный Совет Президиумĕн 1944 çулхи февралĕн 22-мĕшĕнчи Указĕ тăрăх Совет Союз Геройĕн чыслă ятне парса, Ленин орденĕпе «Ылттăн Çăлтăр» медаль памалла тунă. Ывăлăра çакăн пек пысăк награда панă ятпа Сире саламлатпăр. Çак хисеплĕ ята тата правительствăн чаплă наградине вăл фашистла нимĕç захватчикĕсене хирĕç пыракан йывăр çапăçусенче чапа тухнипе илчĕ.

Пирĕн социализмлă Тăван çĕршыв мухтавне тивĕçлĕ сирĕн ывăлăр çĕршывăн чăн-чăн патриочĕ пек, паттăрсен вилĕмĕпе вилсе кайрĕ. Эпир, сталинла гвардеецсем, сирĕн хăюллă ывăлăр çапăçса вилнишĕн Сирĕнпе пĕрлех тарăннăн хуйхăратпăр тата Сире çаплах шантарса калатпăр: пирĕн хĕçпăшал тăшмана çĕнтерĕ, ун чухне киле таврăнса каллех телейлĕ те тулăх пурнăçпа пурăнма пуçлăпăр.

Пирĕн хĕрӳ салама йышăнăр. Йывăр хуйхăна тӳссе ирттерме тӳсĕмлĕх сунатпăр.

Часть командирĕ — Совет Союзĕн Геройĕ гварди майорĕ ПОТЕМКИН».

Пирĕн паттăр земляк Семен Алексеевич Андреев 1924 çулта Елчĕк районĕнчи Энтепе ялĕнче çуралнă. Вăтам шкул пĕтернĕ хыççăн (1942 çулхи сентябрьте) ăна Хĕрлĕ Çара илнĕ.

Тăван çĕршывшăн çапăçса, С. А. Андреев юлташ 1943 çулхи март уйăхĕнче аманнă, иртнĕ çулхи август уйăхĕнче йывăр контузиленнĕ, октябрĕн 26-мĕшĕнче вилсе кайнă. Çапăçури юлташĕсем ăна Днепропетровск облаçĕнчи Солонянски районри Вовничи сывăхĕнчи масар çине пытарнă.

1938-мĕш çултанпа Ленинла-Сталинла комсомолăн ретĕнче тăнă чăваш çамрăкĕ пирĕн ирĕклĕхе юратакан тăван çĕршыва чуралантарма килнĕ нимĕç вăрă-хурахĕсемпе паттăррăн çапăçса вăхăтсăр вилчĕ. Унăн геройла вилĕмĕ совет çамрăкĕсене ылханлă тăшмана тавăрма чĕнет. Унăн паттăр сăнарĕ чăваш халăхĕн чĕринче ĕмĕр-ĕмĕр усранĕ, тăван халăх ăна нихăçан та манмĕ!

Америка летчикĕсемпе совет летчикĕсем тĕл пулни

Н. хули, июнĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС спецкорĕ). Июнĕн 2-мĕшĕнче, боевой задание пурнăçланă хыççăн, Америка бомбардировщикĕсен «Вĕçекен крепость» йышши тата «Мустанг» истребительсен пысăк соединенийĕсем СССР территорийĕ çине анса ларнă.

«Вĕçекен крепость» тата «Мустанг» йышши самолетсем пирвайхи хут çавăн пек пысăк операци туса ирттернĕ. Америкăн Хĕвеланăç Европăри е Çурçĕр Африкăри такăш вырăнсенчи базисем çинчен вĕçсе тухса, вĕсем Румынири çар объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă та, хăйсен базисене таврăнмасăр СССР территорийĕ çине анса ларнă. Бомбăсем тата горючи илнĕ хыççăн вĕсем каллех тăшманăн çар объекчĕсене çĕмĕрме тухса каймалла.

...США сывлăш-çар вăйĕсен карапĕсем килсе çитнĕ кун эпир вĕсен авиобазĕсенчен пĕринче пултăмăр. Хĕрлĕ Çар хĕвеланăçнелле çĕмĕрсе пынипе пула, вĕсем кĕрешӳре совет авиацийĕпе тӳррĕн çыхăнма пултарчĕç. Аэродромăн анлă хирĕнче вĕсене кĕтсе илме Советпа Америка командованийĕн представителĕсем пухăннă. Вĕсем хушшинче — авиаци генерал-майорĕ Перминов, США сывлăш-çар вăйĕсен полковникĕ Кесслер, США-н ССР Союзĕнчи посолĕ Гарриман господин тата ыттисем те.

13 сехет те 35 минутра аэродром тĕлĕнче боевой машинăсен эскадрильи курăнса каять. Чи малтан кĕмĕл пек çапçута машина — флагман карапĕ анса ларать. Америка летчикĕсене кĕтсе илекен совет командованийĕн представителĕ генерал-майор Перминов вĕсене ССР Союзне ăнăçлă çитнĕ ятпа саламлать. США сывлăш-çар флочĕн командованийĕ ячĕпе вĕсен представителĕ, саламсем çине ответлесе, самолетсене йышăнма базăсене лайăх хатĕрленĕшĕн тав тăвать. США президенчĕ Франклин Д. Рузвельт ячĕпе вăл совет генералне Америкăн çар орденне парать.

Сынсем «Вĕçекен крепость» йышши флагман карапĕ тавра пухăнаççĕ. Ăна ĕнтĕ чăннипех сывлăшри броненосец теме пулать. Çав йышши машинăсенчен кашниех тăшманăн Румынири çар объекчĕсем çине 3—4 тоннăран кая мар бомбăсем тăкнă.

...Пĕлĕтре моторсен шавĕ ӳссе пыни илтĕнет. Çĕнĕ эскадрильйăсем вĕçсе килсе анса лараççĕ...

Вĕçсе килнĕ летчиксем пысăк аэродромпа унăн кĕткĕс хуçалăхне тĕлĕнсе пăхаççĕ.

Американецсем çак вĕçев çинчен, Совет Союзĕнче пулнин пирвайхи сехечĕсем çинчен хăйсен шухăш-кăмăлне каласа параççĕ. Хăйсем çинчен вĕсем нумай калаçса тăмаççĕ, чи малтан вĕсем Хĕрлĕ Çар пурнăçĕпе, унăн боецĕсем—летчиксем, танкистсем, артиллеристсемпе пехотинецсем нимĕçсене хирĕç мĕнле кĕрешнипе интересленеççĕ. Совет хĕçпăшалĕн ăнăçлăхĕ çинчен вĕсем питĕ нумай илтнĕ, çавăнпа та совет летчикĕсемпе тĕл пулнăшăн вĕсем питĕ савăнаççĕ.

Пирĕн тавра пилотсен ушкăнĕ пухăнать. «Вĕçекен крепость» самолет çинчи кĕçĕн лейтенант çак вĕçевпе питĕ савăнни çинчен пĕлтерет.

— Сывлăшра лайăх курăнатчĕ. Эпир бомбăсем пăрахнине пула вăйлă пушарсем тухнине куртăм. Каярах вĕçсе килнĕ экипажсем каланă тăрăх, бомбăсем пăрахнă тĕлте таккăшех вутпа тĕтĕм кăна пулнă. Сăмахран,—тет вăл кулкаласа, — эпир питĕ паллă пĕр чугун çул узелĕ çине бомбăсем çав тери вырăнлă тăкрăмăр.

Çак сехетсенче аэродром кĕрлесе çеç тăрать. Анлă хирте ерипен бензозаправщиксем шăваççĕ, вĕсем горючи тултарнă пысăк цистернăсем турттараççĕ. Пĕр чарăнмасăрах «Виллиссемпе» «Доджсем» вăркăнса иртеççĕ.

...Тĕттĕмленсе килет. Çар городокĕн çурчĕсем патĕнче кулă шавĕ илтĕнет. Темиçе летчик савăнăçлă юрă пуçлаççĕ. Çуллахи театрта сывлăш карапĕсен экипажĕсем валли Америка фильмне кăтартаççĕ. Америка летчик-бомбардировщикĕсен совет çĕрĕ çинче малтанхи каçĕ çапла иртет. Тивĕçлĕ вăхăт çитсен, «Вĕçекен крепость» йышши карапсем çӳлелле вĕçсе хăпарĕç те, тăшманăн çар объекчĕсене татах та çĕнĕрен пырса çапĕç. Советсен тата Англипе Америка авиацийĕсем пĕрле пыра-пыра çапнин вăйне нимĕç вăрă-хурахĕсем курĕç-ха!

Н. ПОТАПОВ.

СОВЕТ СОЮЗĔН ИРАНРИ ПОСОЛĔ АМЕРИКА ГЕНЕРАЛĔСЕМПЕ ОФИЦЕРĔСЕНЕ СССР ОРДЕНĔСЕНЕ ПАНИ

ТЕГЕРАН, майăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Майăн 29-мĕшĕнче Совет Союзĕн Тегеранри посольствинче ССР Союзĕн Иранри посолĕ М. А. Максимов юлташ Америка генералĕсемпе офицерĕсен ушкăнне СССР орденĕсене панă. Çав орденсемпе СССР Верховный Совечĕн Президиумĕ Америка генералĕсемпе офицерĕсене вĕсем Совет Союзне хĕçпăшал, вăрçă хатĕрĕсем тата апат-çимĕç тăратас тĕлĕшпе Перси заливĕнчи Америка çарĕсен командованийĕ панă заданисене ăнăçлăн пурнăçланăшăн наградăланă. Орденсене панă хыççăн СССР посолĕпе—Максимов юлташпа США ĕçĕсен Иранри поверенннăйĕ Форд пĕрпĕрне саламласа сăмахсем каланă.

Совет Информаци Бюровĕнчен

ИЮНĔН 3-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июнĕн 3-мĕшĕнче пирĕн çарсем Яссы хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата çурçĕртерехре тăшман пехотипе танкĕсем пирĕн позицийĕсем çине атакăласа пынине пысăк вăйĕсемпе сиресе янă. Тĕрĕсленĕ данныйĕсем тăрăх, пирĕн çарсем ку районра июнĕн 2-мĕшĕнче пулса иртнĕ çапăçусенче нимĕçсен 48 танкне пĕтерсе тăнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тĕпĕ çапса 24 самолетне персе ӳкернĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче улшăну çук пулман.

Июнĕн 2-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 37 самолетне персе ӳкернĕ.

ИЮНĔН 4-МĔШĔНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Июнĕн 4-мĕшĕнче пирĕн çарсем Яссы хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехри тата çурçĕртерехри районра тăшман пехотипе танкĕсен пысăк вăйĕсен пур атакине те ăнăçлăн сирсе янă, тăшмана çыннисемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк сухату кӳнĕ. Июнĕн 3-мĕшĕнче пирĕн çарсем ку районра нимĕçсен 29 танкне çĕмĕрсе тăнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 44 самолетне персе ӳкернĕ.

Фронтăн ытти участокĕсенче улшăну çук пулман.

Июнĕн 3-мĕшĕнче мĕнпур фронтсенче сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери нимĕçсен 53 самолетне персе ӳкернĕ.

* * *

Яссы хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата çурçĕртерехре тăшман танкĕсемпе пехотин пысăк вăйĕсем çаплах пирĕн позицийĕсене атакăланă. Хаяр çапăçусем пынă, час-часах [illegible] тытăçнă. Пĕр чăрри боецсем кун хушшинче гитлеровецсен [illegible] тăнă, 9 танкпа 3 бронетранспортер персе çĕмĕрнĕ. [illegible] тăшманăн 4 атакине ăнăçлăн сирсе янă, пин нимĕçе ытла вĕлерсе тăнă.

Сенгаевскийĕн Сухарев сержантсен тупă расчечĕсем пĕрре тăракан позицисене тăшман танкĕсем пысăк ушкăнпе тапăнса пынă. Пирĕн артиллеристсем, [illegible] тĕл персе, нимĕçсен танкĕсене пĕрин хыççăн теприне юрăхсăр кăларнă. Паттăр боецсем хăйсен ĕçне тупă пеме юрăхсăр пуличченех тăшманпа çапăçнă. Çав çапăçура икĕ тупă расчечĕ нимĕçсен 20 танкне персе сунтарса янă.

Истребитель-летчиксем, Егоров старшин ертсе пынипе, «Аэрокобра» йышши самолетсемпе нимĕç бомбардировщикĕсен ушкăнне атакăланă. Сывлăшри çапăçура Егоров старши лейтенант нимĕçсен 4 самолетне персе ӳкернĕ. Совет Союзĕн Геройĕ Кожедуб капитан тата Евстигнеев капитан тăшманăн пĕрер самолетне пĕтернĕ.

* * *

Новоржев хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре 15 совет разведчикĕ, гварди старшини Озерницковский ертсе пынипе, боевой задание пурнăçа кĕртнĕ. Совет позицийĕсемпе нимĕç позицийĕсем хушшинчи никам йышăнса тăман вырăнта пирĕн боецсем нимĕçсен разведкине тĕл пулнă. Совет разведчикĕсем çĕр çумне курăнми лапчăнса выртнă та тăшмана хăйсен айккипе иртсе кайма панă. Нимĕçсем иртсе кайсан, пирĕн разведчиксем тăнă та гитлеровецсене, хыçран хăвăрт чупса пырса, тылран хăюллăн атакăланă. Çапăçура 31 нимĕç салтакне вĕлернĕ, 12 салтакне тыткăна илнĕ. Пирĕн разведчиксен çухату пулман.

* * *

Витебск хулинчен кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре пирĕн отрядсем халăх пурăнакан пĕр пунктра гитлеровецсем концентрациллĕ лагере хупса лартнă 8.000 мирлĕ халăха ирĕке кăларнă. Нимĕçсен пусмăрĕнче темĕн чухлĕ хĕн курса тата выçăпа вăчăрланса кайнă совет гражданĕсем— старики сем, хĕрарăмсем тата пĕчĕк ачасем те Хĕрлĕ Çар воинĕсене савăнăçлă кĕтсе илнĕ.

* * *

Финн заливĕнче пирĕн торпедăсем пăрахакан пĕр самолет нимĕçсен пысăк суднине атакăланă. Летчик-старши лейтенант Большаков, торпедине тӳрех тивертсе, тăшман суднине шыва путарнă.

* * *

Волынь облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ нимĕçсен подразделенине атакăланă. Икĕ сехет хушши пынă çапăçура партизансем тăшманăн 60 салтакне офицерне вĕлернĕ, 8 пулеметпа автоматсене илнĕ. [illegible] Станислав облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ [illegible] 30 платформа çĕмĕрсе пĕтнĕ. Çав поездсене сыхлакан [illegible] салтакне вĕлерсе пĕтернĕ. Чугун çулĕн çав участокĕ [illegible] ĕçлеймен [illegible].

* * *

Украинăри 2-мĕш фронта Хĕрлĕ Çар енне румынсен 1-мĕш дивизийĕнчи 14 салтак кусăнă. Вĕсенчен пĕри Пон Т. çапла каласа панă: «Румыни территорине нимĕçсем [illegible] Румыни Германи колонийĕ пулса тăнă. [illegible] Малти позицисем çинче темиçе кун тăнă хушăра эпир вырăссем енне каçмалли плана палăртрăмăр. Йышăннă кун малтанах палăртса хунă сехетре эпир пĕтĕм ушкăнĕпех пухăнса çитрĕмĕр. Сасартăк ним кĕтмен çĕртен взвод командирĕн помощникĕ Виктор Винкэ пирĕн пата пырса тухрĕ. Эпĕ ăна хамăр шухăша пĕлтертĕм те пирĕнпе пĕрле вырăссем енне куçма сĕнтĕм. Вăл мана вăрçма пуçларĕ, автомат ярса илчĕ те переспипе хăратма пуçларĕ. Çакна кура, пирĕнтен пĕр салтакĕ Винкэне пулеметпа персе çавăнтах вĕлерчĕ. Сутăнчăка вĕлернĕ хыççăн эпир 3 пулемет, винтовкăсем тата патронсем илтĕмĕр те вырăссем енне каçрăмăр. Нимĕçсене Румыньирен хăвăртрах хăваласа кăларманшкăн мĕн тума пулать, эпир çавна пурне те тума хатĕр». Тепĕр районра румынсен 14-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи салтаксен тата тепĕр ушкăнĕ тыткăна парăннă. Пирĕн енне куçнă салтак Василе С. çапла пĕлтернĕ: «Икĕ уйăх каярах эпĕ хам чăсрен тартăм. Вăрманта пĕр старши лейтенантпа сержанта тĕл пултăм. Часах пирĕнпе пĕрле тата 4 салтак пĕрлешрĕç. Май уйăхĕн варринче сержант пĕр нимĕç майорне вĕлерчĕ. Нимĕçсем пурне те ура çине тăратрĕç, анчах вĕсем пирĕн йĕр çине ӳкеймерĕç. Эпир пурте вырăссен позицийĕсем патне тĕрĕс-тĕкел çитрĕмĕр те тыткăна парăнтăмăр».

Стена хаçачĕсемпе боевой листоксем çуракинче

ВĂРНАР. Çуракинче стена хаçачĕсемпе боевой листоксем пысăк вырăн йышăнчĕç. Вĕсем колхозниксене çуракине кĕске срокра тата лайăх пахалăхпа вĕçлеме, дисциплинăна çирĕплетме пулăшаççĕ.

Çĕн Алтăшри «Волга» колхозра çуракинче вăхăтĕнче кашни бригадăрах стена хаçачĕсем тухса тăчĕç. Вĕсем стахановецсен ĕçри опычĕсене сарас, кахалсене питлесе «сыватас» тĕлĕшпе сахал мар ĕçсем турĕç.

Колхозра ватă старик, фронтовик ашшĕ Алексей Гаврилов ертсе пыракан бригада çуракинче уйрăмах кăтартуллăн ĕçлерĕ. Бригада пĕрчĕллĕ тырăсене тăватă кун çурăра акса пĕтерчĕ. Унăн тимлĕхĕпе пултаруллăхĕ çинчен иртнĕ çул та сахал мар асăннă, хаçатсенче çырнă. Кăçал ăна Чăваш АССР Верховный Совечĕн Хисеплĕ грамотипе наградăланă. Çак паха пример çинчен хаçатсенче тăтăшах çырса тăни çĕнĕрен нумай стахановецсене ӳсме пулăшрĕ. Кăçал боевой листоксем чĕннипе ака ĕçне ватă çынсем нумай хутшăнчĕç. Сухалакансем В. Макаровăпа (вăл 56 çулта) П. Михайлова, ĕçе куллен ир-ирех тухса, сĕм тĕттĕм пуличчен ĕçлесе пычĕç. Нормăпа 1,2 гектар сухалас вырăнне 1,5—2-шер гектар сухаларĕç.

Стена хаçачĕсем кăларас, вĕсене колхозниксем патне вăхăтра çитерес ĕçе «Память Ленина» колхозра та аван йĕркеленĕ. Унта хаçатсене агитколлектив пулăшса пырать. Хаçатсем чĕннипех те колхоз председателĕпе бригадирсен куллёнхи пулăшакансем пулса тăчĕç. Акă фактсем: малтанхи вăхăтра пĕр бригада та нормăна тултарса пырайман. Çакăн çинчен стена хаçачĕсемпе боевой листоксенче хыттăнах асăрхаттарнă. Хаçатсем чĕннипе чи малтан коммунистка Х. Петрова ертсе пыракан бригада ответленĕ. Бригадăри «Çĕнтерӳшĕн» хаçатра сухаçăсемпе акакансем илнĕ обязательствăсене хĕрлĕпе çырса кăларнă. Ĕç чĕннипех юсаннă. И. Степанов, П. Казаков тата ыттисем те хăйсен примерлĕ ĕçĕпе пĕтĕм колхозра паларнă. Уйхир ĕçне лайăх туса пынăшăн Х. Петрова бригадире Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотине панă.

— Вăрçă вăхăчĕ манăн бригадăна та чылай йывăрлăхсем кӳчĕ. Анчах çине тăрса ĕçлесен, вĕсене çĕнтерме пулать. Эпĕ упăшкам аллинчен илсе юлнă ĕçре патриот пулма тăрăшрăм. Кам ĕçре тăван çĕршывшăн тăрăшать, унăн çитĕнӳсем те пулаççĕ. Кăçал эпĕ гектартан 100-шер пăт тырă илме ĕмĕтленсе ĕçлетĕп, — çапла çырнă Х. Петрова «Çĕнтерӳшĕн» хаçатăн 7-мĕш номерĕнче.

Комсомолăн колхозри организацийĕн секретарĕ А. Тарасов юлташ 3-мĕш бригадăра тухса тăракан боевой листока ертсе пырать. Вăл, республикăри «Чăваш Коммуни» хаçатпа куллёнхи ĕçре усă курса, хăйĕн хаçатне чĕннипех халăха ĕçе мобилизацилекен вăй туса хунă. Хаçат ĕçри çитменлĕхсемпе вăйлăн кĕрешет. Майăн 15-мĕшĕнче тухнă номерте ĕçкунĕсен минимумне тултарманнисем çинчен хыттăн çырнă, çавăнтах уйрăм колхозниксен ку тĕлĕшпе çырнă статьисене пичетленĕ. Ун хыççăн вара чылайĕшĕсем ĕçе активлăнрах хутшăнма пуçланă.

Кăçал кунта Вăрнар МТС-ĕн 6-мĕш трактор бригади ĕçлерĕ. Малтанах вăл хăйĕн уменчи задачăсене тивĕçлипе пурнăçа кĕртсе пыраймаи. Колхозри мĕнпур хаçатсем тата трактор бригадинчи боевой листок çавăн çинчен темиçе хут та çырни ĕçре пулăшрĕ.

Районри хаçат та колхозри стена хаçачĕсене пулăшас ĕçе лайăхлатрĕ.

Халĕ ĕнтĕ колхозсем çуракине вĕçленĕ хыççăн стена хаçачĕсемпе боевой листоксен хăйсен ĕçне тырпулсене пухса кĕртме тĕплĕн хатĕрленес, выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плана ирттерсе тултарас задачăсене пăхăнтармалла.

С. СЕЛЕЗНЕВ.

„Сунарçă халлапĕсем"

Чăвашсен ача-пăчасен писателĕ Куçма Чулкаçăн «Сунарçă халлапĕсем» ятлă фантазиллĕ-приключениллĕ кĕнеки чăваш ачисем хушшинче нумай саралнă ĕнтĕ. Анчах та вулакансем ăна çаплах ыйтаççĕ.

Çак кунсенче Чăвашгосиздат Чулкаçăн «Сунарçă халлапĕсене» тепĕр хут чăвашла тата вырăсла кăларчĕ. Кĕнекесен тиражĕ чăвашла 3 пин, вырăсла 5 пин экземпляр.

КРЫМРИ КУРОРТСЕНЕ ЮСАÇÇĔ

Нимĕçсем Крыма йышăнса тăнă вăхăтра унăн кăнтăр çыранĕнчи питĕ чаплă курорчĕсене çĕмĕрсе пĕтернĕ.

Халĕ Крымри курортсене юсаса ура çине тăратаççĕ. Ялта, Ливади, Алушка, Мисхор, Симеиз чĕрĕлме тытăннă, паркçене, садсене, урамсене йĕркене кĕртеççĕ. Крымăн кăнтăр çыранĕнчи тин çеç юсаса пĕтернĕ 10 санаторире аманнă фронтовиксем канаççĕ, сывалаççĕ. Пирогов ячĕпе тăракан «Пролетарий», «Ливади» санаторисене тата Алупкăри шăмă туберкулезĕпе чирленĕ ачасене сыватакан санаторие юсаса пĕтереççĕ.

Севастопольте Сеченов ячĕпе тăракан физикăлла майсемпе сыватакан институтăн çуртне юсаççĕ. Пурте пĕлсе тăракан чаплă Артека юсама тытăннă. (ТАСС).

Ют çĕршывсенче

Италири вăрçă ĕçĕсем

Союзниксен çарĕсем Итали столицине Рим хулине йышăннă

ЛОНДОН, июнĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: американецсен 5-мĕш армийĕн чаçĕсем, вăйлă çапăçусем хыççăн Веллетрипе Вальмонтоне хулисене туртса илнĕ пулин те, тăшман кунти фронтăн çав участокри позицийĕсене татайман-ха. Çапах та тăшманăн Веллетри хулинчен çурçĕртерехри позицийĕсенче татса кĕнĕ вырăна аслăлатнă. Кунта тăшман оборони самай анлă талккиш йышăнса тăрать, тăшман çарĕсем хытă хирĕç тăрса çапăçаççĕ.

Акăлчансен 8-мĕш армийĕ тăшмана çурçĕрелле тата хĕвеланăçнелле саплах хĕссе кăнтăртарахра нимĕçсем хирĕç тăрасси пуçĕпех пĕтнĕ. Акăлчансен 8-мĕш армийĕн чаçĕсем çурçĕр-хĕвеланăçнелле чакакан тăшмана хăвалтлăн пыра-пыра çапаççĕ. Веллетри хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнелле выртакан Коллеферропа Ананьи хулисене туртса илнĕ.

Союзниксен авиацийĕ ĕнер тăшманăн Италири объекчĕсене атакăланă. Çавăн пекех Югославири портсемпе суднăсем çине тата Омишпа Сплит хулисенчи (Югослави) объектсем çине те бомбăсем пăрахнă.

Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс авиацийĕ 2.100 вĕçев ытла тунă.

пынă. Ферентинопа Вероли хулисене туртса илнĕ хыççăн союзниксен малти отрячĕсем Алатри хули патнелле çывхарса пыраççĕ.

Июнĕн 2-мĕшĕнче союзниксен эсминецĕсем тăшманăн Анцио хулинчен çурçĕртерехри объекчĕсене ăнăçлăн персе тăнă.

Союзниксен авиацийĕ çаплах тăшманăн Италири çарĕсене тата вăрçă объекчĕсене тапăнса тăнă.

Авиаци ытти соединенийĕсем тăшманăн Югославири транспорчĕпе пĕр çĕре пухăнса тăнă çарĕсене тапăннă.

Йывăр бомбардировщиксен пысăк соединенийĕсем, истребительсем хӳтĕлесе пынипе, Хĕвелтухăç Венгрипе Румынири чугун çул узелĕсем çине бомбăсем пăрахнă.

Çак операцисенче союзниксем 5 самолет çухатнă. Çапăçусем вырăнĕнче тăшманăн кунĕпе те 6 самолет кăна пулнă.

Иртнĕ каç союзниксен авиацийĕн бомбардировщикĕсем тăшманăн Джурджури объекчĕсем çине (Румыни) бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, июнĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паян 5-мĕшпе 8-мĕш армисен чаçĕсем Виа Касселина çулĕ çинче пĕр-пĕринпе пĕрлешнĕ.

ЛОНДОН, июнĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ çапла пĕлтерет: американецсен 5-мĕш армийĕн çарĕсем, тăшман оборонин Римран кăнтăртарахри линийĕнчи татса кĕнĕ вырăна аслăлатса, линие нумай пунктсенче тата-тата кĕнĕ. Халĕ çав çарсем Колли Латупали ятлă тусен крешĕн пысăк пайне йышăнса тăраççĕ, ку тусем Рим хули патнелле пымалли çулсене хăйсен аллинче тытса тăраççĕ. Виа Касселина çулĕнчен

АЛЖИР, июнĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Юлашки хыпарсем тăрăх, союзниксен çарĕсем Итали фронтĕнче наступлени пуçланнăранпа 20.000 çынна яхăн тыткăна илнĕ.

АЛЖИР, июнĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен главнăй штабĕ паян çапла пĕлтерчĕ: американецсен 5-мĕш армийĕн çарĕсем Рим патне çывхарса пыраççĕ.

ЛОНДОН, июнĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин Рималла пыракан 5-мĕш армийĕн çарĕсем çумĕнчи корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: паян ирхине 6 сехет те 50 минутăра американецсен 5-мĕш армийĕн чаçĕсем нимĕç çарĕсемпе Рим çывăхĕнче çапăçма пуçларĕç.

АЛЖИР, июнĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: американецсен 5-мĕш армийĕ Рим хулине кĕчĕ.

ЛОНДОН, июнĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çумĕнчи специальнăй корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: американецсен 5-мĕш армийĕн чаçĕсем Рим хулинче метр хыççăн метр малалла куçса пыраççĕ.

АЛЖИР, июнĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çапла пĕлтерет: нимĕçсем Рим хулинче çаплах хирĕç тăраççĕ-ха.

ЛОНДОН, июнĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: паян 21 сехет те 15 минутра Рим хулине нимĕçсенчен тасатса çитернĕ. Çак хыпара американецсен Ассошиэйтед пресс агентстви Римран пĕлтернĕ.

Рима американецсен 5-мĕш армийĕн танковой чаçĕсем тасатнă, вĕсем нимĕç çарĕсене хула тулашнелле хĕссе кăларнă.

Союзниксен авиацийĕн ĕçĕсем

ЛОНДОН, июнĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Официально пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер кăнтăрла американецсен йывăр бомбардировщикĕсен питех те пысăк соединенийĕсем, истребительнăй авиацин самаях пысăк вăйĕсем хӳтĕлесе пынипе, нимĕçсен Францири Ла-Манш çыранĕнчи вăрçă объекчĕсене тапăннă. Германи истребителĕсем хирĕç тăрса çапăçни пулман. Зенитнăй артиллери пени те вăйсăр пулнă. Тапăнура пулнă самолетсем пурте хăйсен базисене каялла таврăннă.

Çав кунах американецсен йывăр бомбардировщикĕсем тăшманăн Париж хулинчен хĕвеланăçнерехри вăрçă объекчĕсене тапăннă.

Июнĕн 2-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англи флочĕн авианосецĕсем çинче вырнаçса тăракан самолетсем Норвеги çыранĕсем çывăхĕнче тăшман суднисен караванне атакăланă. Ку каравана вăйлă хурал сыхласа пынă. 3 суднана бомбăсем тӳрех пырса тивнĕ. Çавăн пекех тата хуралта пыракан 4 карапа сиенленĕ.

ЛОНДОН, июнĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Англин авиаци министерстви çапла пĕлтерет: июнĕн 4-мĕшĕ ыран тенĕ чух çĕрле Англин бомбардировочнăй авиацийĕн самолечĕсем Франци çыранĕнчи вăрçă объекчĕсене тапăннă. Çавăн пекех тата Людвигсхафен хули çине те (Германи) бомбăсем пăрахнă.

РУМЫНИЕ СЫВЛĂШРАН ТАПĂННИН РЕЗУЛЬТАЧĔСЕМ

ЛОНДОН, июнĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин союзниксен Италири çарĕсен штабĕ çумĕнчи специальнăй корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: сывлăшри разведка пĕлтернĕ тăрăх, Дунай шывĕн Румыни хĕрринче халĕ те танкерсемпе нефть склачĕсем, çавăн пекех тата Джурджу портĕнчи (Бухарестран 40 миля кăнтăртарахра) сооруженисем те çунаççĕ. Вĕсене союзниксен авиацийĕ тапăнса вут тивертсе янă. Корреспондент çакна паллă туса хăварать: союзниксен авиацийĕ Плоешти хулине тапăниччен Джурджу порчĕ урлă тасатнă нефть уйăхсерен чылай кайса тăнă.

Югославири çапăçусем

ЖЕНЕВА, июнĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен панă хыпарсем тăрăх, Югослави халăхне ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çарăн верховнăй штабĕ çапла пĕлтернĕ: Хĕвеланăç Боснире нимĕçсем темиçе кун каярах наступлени пуçласа янă, вĕсем ирĕке кăларнă территорие çĕмĕрсе тухма хăтланаççĕ. Çак операцисенче нимĕçсен 3 дивизийĕ ытла çапăçать. Майăн 25-мĕшĕнче Дрвар хулинче нимĕçсем парашютсемпе 2 десант антарнă. Десант антарас ĕçе нимĕçсем, бомбардировщиксемпе тапăнса, вăйлăн хӳтĕлесе тăнă. Халăха ирĕке кăларассишĕн кĕрешекен çар чаçĕсем çав асăннă икĕ десант чаçĕсене çавăрса илнĕ, хаяр çапăçусем пуçланса кайнă, çапăçусенче гитлеровецсене çуррине ытла пĕтерсе тăкнă. Десант чаçĕсене пуçĕпех пĕтерсе тăкасран хăлса хăварма хăтланса, нимĕçсем çапăçăва моторизованнăй дивизие кĕртсе янă, ку дивизие гитлеровецсен танковăй чаçĕсемпе авиацин пысăк вăйĕсем пулăшса тăраççĕ.

Баньа-Лука, Яйце тата Мркониć-Град хулисен районĕсенче нимĕç çарĕсем 2 дивизи таран вăйпа Ключ тата Млиништ хулисем еннелле наступлени пуçласа янă. Ливно хулинчен наступлени пуçласа янă тăшман çарĕсене аркатса тăкнă, вĕсене хăйсен малтанхи позицийĕсем çине каялла ывăтса янă.

Фронтăн пур участокĕсенче те çаплах çапăçусем пыраççĕ.

ЖЕНЕВА, июнĕн 4-мĕшĕ. (ТАСС). Югославирен панă хыпарсем тăрăх, Югослави халăхне ирĕке кăларассишĕн çапăçакан çарăн верховнăй штабĕ çапла пĕлтернĕ: Хĕвеланăç Боснире Югослави чаçĕсем, оборонăра тăрса, нимĕçсен пысăк вăйĕсемпе хаяррăн çапăçаççĕ. Нимĕçсем темиçе енчен те атакăсем тăваççĕ.

Словенире Югославин 7-мĕш корпусĕн чаçĕсем хаяр çапăçусем хыççăн тăшманран Мина Печ ятлă тĕреклетнĕ пункта туртса илнĕ. Трофейăсем чылай тытса илнĕ.

Америка союзниксене самолетсем тăратни çинчен Рузвельт калани

ВАШИНГТОН, июнĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). Паян Рузвельт пресс-конференцире çапла каланă: хĕçпăшала кивçенпе арендăна парасси çинчен калакан закона пурнăçа кĕртме пуçланăранпа (1941 çулхи мартăн 11-мĕшĕнчен пуçласа 1944 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕччен) пĕрлешӳллĕ нацисен хĕçпăшаллă вăйĕсем валли США-ран 33 пин самолет ытла янă. Союзниксем 7.000 самолетшăн тивекен укçана çавăнтах тӳлесе татнă, ытти 26 пин самолетпа хĕçпăшала кивçен е арендăна парасси çинчен калакан закон тăрăх панă.

США çав вăхăт хушшинчех 175 пин самолет ытла туса кăларнă. «Çапла ĕнтĕ, — тенĕ Рузвельт, — союзниксене çав тери нумай самолет панă пулин те, эпир пĕрлешӳллĕ нацисемпе пĕрле тискер тăшмана хирĕç çапăçнă чухне хамăра тивекен пая пурнăçлама кирлĕ чухлĕ самолет (хамăр туса кăларнă самолетсенчен 5 пайĕнчен 4 пайне) хамăр патрах хăварнă».

СОФИЯ ХУЛИНЧИ ЛАРУ-ТĂРУ

СТАМБУЛ, июнĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). София хулинчен килнĕ çынсем çапла пĕлтереççĕ: Болгари столицинчи пурнăç халĕ те пĕтĕмĕшпех йĕркерен тухнипех тăрать. Хулара çутă та, шыв та çук. Мĕнпурĕ те хула тулашĕнчи пĕртен-пĕр трамвай линийĕ кăна ĕçлет. Ишĕлнĕ çуртсене юсас тĕлĕшпе пачах ĕçлемеççĕ. Нимĕçсем кăна сахал сиенленнĕ çуртсене хăйсем валли юсаççĕ. Хулара мĕнпурĕ те 2—3 пин çын кăна юлнă, ыттисем пурте хуларан тухса кайнă. Хулара ĕçлесе тăракан çынсем, тĕппипе илсен, пурте кӳршĕри ялсенче пурăнаççĕ, çавăнпа вĕсем хăйсен ĕç вăхăчĕ пĕтсенех хуларан туха-туха тараççĕ. Суту-илӳçĕсене власçем сиенленмесĕр тăрса юлнă магазинсене уçма хушнă, анчах та çакна никам та пăхăнмасть. Мунчасем, пекарньăсем тата ытти коммуналлă предприятисем те хупă тăраççĕ. Çăкăр илме хулари халăх хула тулашне çӳрет, шыв та çавăнтанах йăтаççĕ.

Софияран государство учрежденийĕсене куçарса кайнă пирки, хулари административлă учрежденисем пĕтĕмĕшпе тенĕ пекех хупăнса ларнă, предприятисене суту-илӳ заведенийĕсене хупса лартнă, çавăн пирки çынсем нумайĕшĕ ĕçсĕр тăрса юлнă. Вĕсем ĕç шыраса ялсем тăрăх çӳреççĕ, вĕсен час-часах уçă пĕлĕт айĕнчех çĕр каçмалла пулать. Болгари правительствин членĕсем тата ытти официальнăй çынсем хулара хутра-ситре кăна пулаççĕ. София хулине полици, жандармери тата нимĕçсем тытса тăраççĕ.

ФОН-ШВЕРИН ГЕНЕРАЛА СОВЕТ СОЮЗĔПЕ ГЕРМАНИ ФРОНТĔНЧЕ КАЯЛЛА ЧАКНĂШĂН ÇАР СУДНЕ ПАНĂ

СТОКГОЛЬМ, июнĕн 3-мĕшĕ. (ТАСС). «Афтонтиднинген» ятлă хаçат пĕлтернĕ тăрăх, нимĕçсен генерал-лейтенантне граф фон-Шверина Гитлер хушнă тăрăх Грауденц хулинчи крепоçа хупса лартнă. Ку крепоçра çар сучĕ пуласса кĕтсе чылай нимĕç офицерĕсем лараççĕ ĕнтĕ. Шверин генерала «çапăçура хăраса ӳкнĕшĕн» çар судне панă.

Хаçат çапла çырать: фон-Шверин нимĕçсен 16-мĕш мотодивизин командирĕ пулнă. Нимĕçсен 6-мĕш армийĕн командующийĕ генерал-полковник Холлидт мартăн 16-мĕшĕнче çав дивизие «юлашки салтак пĕтиччен çапăçма хушса» приказ панă, анчах та фон-Шверин, çав приказа пăхăнмасăр, хăйĕн дивизине каялла чакма приказ панă.

Хаçат çырнă тăрăх, нимĕç офицерĕсен ушкăнĕсем Гитлер фон-Шверина çар судне панăшăн тарăхаççĕ. Вĕсем çапла шутлаççĕ: «Гитлер каллех хăйĕн ухмахла приказĕсене тӳрре кăларасшăн кама та пулин урăххине айăплă туса кăтартма тăрăшать».

Нумаях пулмасть, Совинформбюро фон Шверин генералпа Холлидт генерал-полковник пĕр-пĕрин патне çырнă хутсене, нимĕçсен 6-мĕш армине аркатса тăкнă чухне тытса илнĕскерсене, пичетлесе кăларнăччĕ.

КĔСКЕН

▲ Стокгольма США-н ют çĕршывсенчи экономика ĕçне ертсе пыракан управленин представителĕ Стентон Гриффис çитнĕ. Вăл Швеци правительствипе шведсем Германие шарикоподшипниксем ярса тăни çинчен калаçса татăлмалла.

▲ Ефрат шывĕ çыранран тухса сарăлса кайнă пирки Абуль-Кемаль хули (Сирипе Ирак чиккинче) шыв айне пулнă. Темиçе çĕр çурт пĕтнĕ. Çынсем нумай пĕтнĕ.

Ответлă редакторăн заместителĕ **А. А. ЭСХЕЛЬ.**

ПАЯН
июнĕн 6-мĕшĕнче
Чăвашсен Государство филармонийĕ Чăвашсен Государство Академи Театрĕнче А. С. Пушкин çуралнăранпа 145 çул тултарнă май
ПУШКИН ВЕЧЕРЕ
туса ирттерет.
Вечерта çаксене кăтартаççĕ: «Борис Годуноври», «Каменный гостьри» тата «Скупой рыцарьти» сценăсене, А. С. Пушкин сăввисем тăрăх çырнă романссене юрласа параççĕ, çавăн пекех тата сăвăсем вуласа параççĕ.
Билетсене театр кассинче кăнтăрла иртсен 4 сехетрен пуçласа сутаççĕ.

Шупашкарти «Пекарь» артелĕ çакăн пек рабочисем кирлĕ: главнăй бухгалтер, старши бухгалтер, плановик, снабжени заведующийĕ.
Çак адреспа ыйтса пĕлмелле: гор. Чебоксары, Интернациональная, 2.

Пристань шывпа ăсатма грузсем тата багажсем кирек мĕн чухлĕ те йышăнма пултарать. Учрежденисене хăйсен шывпа ăсатмалли грузĕсене пристань складне илсе пырса пама ыйтаççĕ.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

Чăваш АСС Республикинчи вырăнти промышленность, апат-çимĕç тата аш-какайпа сĕт-çу промышленноçĕсенчи, промысла коопераципе инвалидсен кооперацийĕнчи уйрăмах палăрнă рабочисене, инженерла-техникла тата ертсе пыракан работниксене Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăласси çинчен

(Малалли. Пуçламăшĕ „Чăваш Коммунин" 109-мĕшпе 110 мĕш номерĕсенче).

60. Мария Александровна **Бурашниковăна** — Çĕмĕрле районĕнчи Ширшов ячĕпе тăракан артельти çĕвĕ çĕлекен цехăн бригадирне.
61. Александр Петрович **Гиляровские** — ВКП(б) Йĕпреç райкомĕн иккĕмĕш секретарьне.
62. Анна Федосеевна **Егоровăна** — Шупашкарти «Вышивка» промартелĕн председательне.
63. Ирина Егоровна **Егоровăна** — Вăрмар райпищекомбиначĕн типĕтекен цехри работницине.
64. Михаил Данилович **Егорова** — Чăваш АССР Вырăнти промышленность Халăх Комиссарне.
65. Анна Федоровна **Елохинăна** — Канашри уйрăм çынсен тумтирĕсене çĕлекен мастерскойри çĕвĕçе.
66. Федор Тимофеевич **Елькина** — Канашри инвалидсен «Красный воин» артелĕнчи тĕрĕс механика цехĕн заведующине.
67. Илья Семенович Емельянова — Вăрмар райпромкомбиначĕн рабочине.
68. Иван Алексеевич **Ермолова** — Октябрьски районри «Труд» промартельти сăран тăвакана.
69. Мария Федоровна **Ермолаевăна** — Пăрачкав районĕнчи Киров ячĕпе тăракан промартельти закройщицăна.
70. Евдокия Анисимовна **Ершовăна** — Чкаловски районри çĕвĕ çĕлекен «Мотор» промартелĕн техноруке.
71. Вера Борисовна **Еселевскаяна** — Канашри горпромкомбинатăн инженерне.
72. Никандр Ефимович **Ефимова** — Шупашкарти инвалидсен «Чебторгин» артелĕн атă-пушмак çĕлекен цехĕн бригадирне тата атă-пушмак çĕлеме касса хатĕрлекене.
73. Сергей Ефимович **Ефимова** — Куславкка райпромкомбиначĕн управляющине.
74. Мария Ефремовна **Ефремовăна** — Советски райпромкомбиначĕн формовщицине.
75. Марфа Егоровна **Егоровăна** — Вăрмарти çу завочĕн Çĕнĕ Вĕренер ялсоветĕнче сĕт-çу пухакана.
76. Михаил Ефимович **Элюкова** — Çĕмĕрле районĕнчи «Обод» артель правленийĕн председательне.
77. Максим Федорович **Железнова** — Шупашкарти лесохимартельти кашăк тăвакана.
78. Василий Матвеевич **Жидова** — Первомайски районри Ленин ячĕпе тăракан промартельти станочницăна.
79. Владос Юльевич **Жилинскаса** — Канашри «Авангард» промартелĕн атă-пушмак çĕлекен мастерне.
80. Петр Хрисанфович **Журавлева** — Канашри «Авангард» промартелĕн кирпĕч завочĕн директорне.
81. Степан Максимович **Зайцева** — Ишлей райпромкомбинатĕнчи бригадира.
82. Михаил Алексеевич **Зарубина** — Чăвашшвейпромсоюзăн оргтотдел заведующине.
83. Пелагея Клементьевна **Захватовăна**— Канаш хулинчи апат-çимĕç комбиначĕн директорне.

(Малалли пулать).

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати, ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, заместительпе секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн — 3—99, промышленноçпа ялхуçалăх пайĕсен 5—31, издательство конторин —0—23.

НТ 00166 Типографи №1. Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ №2 ф. 6. 59Х42 п. л. Тираж 14.400 экз.